**Малтан йӑмӑх, кайран…**

**(калав)**

АШШӖПЕ АМӐШӖ уйрӑлнине Оля астумасть — виççӗре çеçчӗ ун чухне. Анчах çитӗнсе пынӑçемӗн хӑйне тантӑшӗсенчен катӑкрах пек туйма пуçларӗ, амӑшне шеллеме тытӑнчӗ. Темрен ытла арçынсен уявне — февралӗн 23-мӗшне — кӑмӑлламасӑр ӳсрӗ: çав кун саламламашкӑн уншӑн çывӑх çын тупӑнмарӗ.

Улттӑмӗш класа куçсан Оля хӑйӗн амӑшӗ Вера тӑрук улшӑнма тытӑннине сисрӗ. Хӗрарӑм ӗç хыççӑн каярах юлса таврӑнма пуçларӗ, ывӑнса килсен те кӑмӑлӗ пӑсӑлни туйӑнмарӗ, хаваслӑрах тыткаларӗ хӑйне. Кӗçех вӗсем патне хӑнана Юра — амӑшӗнчен виçӗ-тӑватӑ çул аслӑрах арçын — килкелеме тытӑнчӗ. Пӗррехинче вара çӗр каçмах юлчӗ.

Анчах та сасартӑк Ольӑсем патне темӗнле хӗрарӑм телефонпа шӑнкӑравлама пикенчӗ. Пӗр-икӗ хут чӑрмантарнипе çырлахмарӗ хайхискер, шӑнкӑравламассерен хаярланса пычӗ вӑл, хӗрачапа ун амӑшне тавӑрассипе хӑратрӗ. Пӗррехинче хваттере килсе кӗчӗ. Верӑпа Юра тата кӗтмен хӑна кухньӑра хытах шавларӗç. Хӗрарӑм макӑрса, Юрӑна усал сӑмахсемпе хӑртса хӑварчӗ.

— Тек пырса ан курӑн, ывӑлу патне ура ярса ан пус! — арçынна чышкипе юнаса тухса кайрӗ вӑл.

Ӑнланса илчӗ Оля: ку Юрӑн арӑмӗ.

Арçын тек Верӑран уйрӑлмарӗ, вӗсем иккӗшӗ пӗрле пурӑнма тытӑнчӗç. Оля Юрӑна хӑнӑхса пычӗ, пурӑна киле ӑна «атте» теме тытӑнчӗ.

Шкул пӗтерсен Оля института вӗренме кӗчӗ. Виççӗмӗш курсра Тольӑпа, пиллӗкмӗш курс студенчӗпе, паллашрӗ. Кӗçех вӗсем пӗр-пӗрне юратнине систерчӗç, кунсерен ытларах та ытларах çывӑхланса пычӗç.

Оля диплом илнӗ-илмен пӗрлешме калаçса килӗшрӗ икӗ савни. Каччӑ лайӑх ӗçре тымар янӑччӗ ӗнтӗ, çемйине тытса тӑмалӑх вӑй пухнӑччӗ. Пурте йӗркеллӗ, савӑнса пурӑнмалла кӑна...

Толя юратнӑ хӗрне амӑшӗпе, Анна Максимовнӑпа, паллаштарма хатӗрленчӗ, канмалли кун ӑна килне чӗнчӗ. Ашшӗ вӗсене тахҫанах пӑрахнине каччӑ малтанах пӗлтернӗччӗ.

Анна Максимовна пулас кинне хапӑл туса йышӑнчӗ. Ольӑна хӑйсем патне туйчченех куҫма сӗнчӗ.

— Каҫарӑр та, аттерен ирӗк ыйтмалла. Анне хирӗҫлеме пултарать, — иккӗленчӗ хӗр.

Калаҫса ларнӑҫемӗн хӗрарӑм сасси таҫта илтнӗскер пек туйӑнма тытӑнчӗ, кӑштахран Оля ун сӑнне те темиҫе ҫул каялла курнине аса илех кайрӗ. Тахҫан-тахҫан вӗсем патне пырса амӑшне ылханса хӑварнӑскер мар-и, ара? Мӗнле вӑй ҫитерчӗ-ши хӗр — палӑртмарӗ кӑмӑлӗ хуҫӑлнине, хӗрарӑма палланине систермерӗ. Урама тухсан вара хӑйне ӑсатакан Юрӑна вӑрттӑнлӑхне уҫса пачӗ.

Чылайччен ларчӗ йывӑрлӑха кӗрсе ӳкнӗ мӑшӑр йывӑҫ айӗнчи сак ҫинче. Куҫҫульне шӑла-шӑла макӑрчӗ хӗр. Юра ашшӗне ҫак таранччен кураймасӑр пурӑннине каласа пачӗ. Оля, ашшӗне ҫак таранччен юратса ҫитӗннӗскер, ӑна хӳтӗлесе пӗр сӑмах та хушаймарӗ.

Тертлӗ кунсем пуҫланчӗҫ Юрӑпа Ольӑшӑн. Мӗн тумаллине пӗлмерӗҫ вӗсем. Упӑшкипе арӑмӗ пек ҫывӑхланса ӗлкӗрнӗрен пушшех асапланчӗҫ, пӗр-пӗринчен уйрӑлас пирки сӑмах та хушмарӗҫ.

— Юрӗ, пӗтӗмпех хам ҫине илетӗп, — хӗре лӑплантарма пӑхса ҫирӗп шухӑш тытрӗ Юра.

Ашшӗпе тӗл пулма хӑюлӑх ҫитерчӗ вӑл. Ӑна урама чӗнтерсе кӑларчӗ. Чылайччен калаҫрӗ икӗ арҫын. Ашшӗ темиҫе хутчен каҫару ыйтрӗ ывӑлӗнчен, хӑйӗн айӑпне йышӑнчӗ.

— Пӗтӗмпех санран килет. Пӗр-пӗрне юрататӑр пулсан чӗрӳ хушнине ту, — терӗ вӑл.

Оля амӑшӗ вара хӗрӗ ун упӑшкин ывӑлне качча тухма хатӗрленнине пӗлсен минренинчен ытларах урса кайрӗ:

— Юрамасть капла тума, юрамасть! Аҫун малтанхи арӑмӗпе тӑванлаштарасшӑн-и эс пире? Эс мана сутасшӑн-и? Ямастӑп сана ниҫта та, памастӑп вӗсене!

Темиҫе кун та иртрӗ, Оля амӑшӗ кӑмӑлне улӑштармарӗ. Ашшӗ вара тӑтӑшах унпа юнашар пулма тӑрӑшрӗ, ӑна та, арӑмне те лӑплантарма пӑхрӗ.

— Пире итлӗр те, хӑвӑр мӗнле тӑвас тетӗр, ҫавнашкал тӑвӑр. Пирӗн йӑнӑшсемшӗн сирӗн хур курмалла мар. Манран чару ҫук, сире иксӗре те телейлӗ тӑвас килет, ҫавӑ ҫеҫ, — терӗ пил панӑн хӑйшӗн пӗрешкел хаклӑ икӗ чуна.

Ольӑпа Юра тепӗр уйӑхран ҫырӑнчӗҫ. Туя ҫын йышлӑ пухмарӗҫ, тусӗсене кӑна чӗнчӗҫ. Вӗсен амӑшӗсем пӗри те загса та, уяв каҫне те пымарӗҫ. Ашшӗ вара ир пуҫласа каҫченех ҫамрӑк мӑшӑрпа юнашар пулчӗ.

Вӑлах ывӑлӗпе кинне малтанлӑха пурӑнма хваттер тупса пачӗ. Арӑмӗсен кӑмӑлӗ ҫаврӑнасса шанать вӑл. Шаннӑран йӑпатать Ольӑпа Юрӑна:

— Мӑнук ҫуралтӑр ҫеҫ, пӗр харӑс чупса пырӗҫ, кашниех сире хӑй патне таврӑнма ӳкӗтлӗ...

*Павлов-Вэскер, С. Л. Малтан йӑмӑх, кайран… : [калав] // Павлов-Вэскер, С. Юрату тумхахӗсем : новеллӑсем, калавсем / С. Павлов-Вэскер. – Шупашкар, 2011. – С. 32-34.*